Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – **www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

## Автор: Кадкин Лев Кириллович

## Книга: Çĕрçи кăнтăрĕ

## Сказка: Упапа кăткăсем

Пĕррехинче эпĕ вăрманта хамăн тахçанхи пĕлĕшпе, Куян ятлă мулкачпа, тĕл пултăм. Вăл мана вăрманта мĕн пулни-иртнине пĕлтерсех тăрать. Çавсенчен пĕрне эпĕ сире те каласа парас терĕм.

«Пурăннă тет пирĕн тăрăхра упа. Чăн-чăн утаман пулнă çав Мишша. Шав вăйĕпе мухтанса çӳренĕ вăл. Калăпăр, кашкăра курать те алă панă чухне унăн тяппине хĕстерсе лартать, лешĕ чăтайманнипе çухăрсах ярать. Упине çавă çеç кирлĕ, ахăлтатса кулать кашкăртан: «Эсĕ мĕн, кашаман, шӳт-кулăша ăнланмас-тăн-им? Эпĕ сана сывлăх сунатăп, эсĕ пур – тӳрех ӳлеме тытăнатăн». Кашкăрĕн кулас шухăш-и, хытă чăмăртанипе унăн шăммисем шатăр-шатăр тăваççĕ.

Тилле курать хайхи упа – ăна асаплантарма тытăнать: унтан та кунтан чĕпĕтет, хӳринчен турткалать, лешĕ енчен енне кускалать кăна. Упи çаплах: «Ну, тилĕçĕм, кăтарт-ха пултарулăхна, – тет, çыпăçмаллипех çыпăçать. – Сана капăр пике теççĕ, вăрманĕпе те сан пекки çук теççĕ. Атя çаврăнкала-ха ман умра, кăтарт-ха хăвна. Юрать, тата тепре». Тилли йĕрсе яманни анчах, аран-аран вĕçерĕнет вăл утаман аллинчен...

Пирнешкел вĕт-шакăрăн-и? Курăниччен курăнманни унăн куçне. Хăлхаран ярса илет те – е унтан та кунтан çапать, е арçури пек кăтăклать, кулать. Вĕçерĕнсе тараймасан тăна илет.

Ярса тытрĕ пĕррехинче хайхискер мана. Ăçта кайса кĕрес? Мĕн те пулин тумаллах, атту пĕтетĕн. Чуна илет. Хăю çитерсех калатăп утамана: «Итле-ха, Мишша тете, пирĕн вăрманта санран та вăйлăрах чĕр чунсем пур вĕт. Пĕлетĕн-и, санран вĕсем нимĕн чухлĕ те хăрамаççĕ».

«Камсем вара вĕсем? Халех чĕн вĕсене ман пата, Курăпăр унта, хăшĕ вăйлăрах!»

Эпĕ асăрхануллăн калатăп: «Çу-ук, Мишша тете, ун пек май килмест. Хăюллисем хисепе тивçлĕ. Эсĕ вăй виçесшĕн пулсан хăвăнах каймалла вĕсем патне».

«Апла тăк, – тет утаман, – ертсе кай мана вăл паттăрсем патне. Эп мăн кăмăллă мар, анчах вăрманта кам хуçа пулнине кăтартатăп вĕсене».

Ертсе кайрăм хайхи хуçана кăткăсем патне. Тĕмĕ патне çитсен кăтартрăм: «Акă вĕсен килĕ. Акă кăтки, пĕчĕк кăна, анчах хăйĕнчен темиçе хут пысăкрах курăка сĕтĕрет. Эс хăвăнтан йывăртарах япалана çĕклеетĕн-и-ха?».

Кăтка курсан упа мĕкĕрсе ячĕ: «Эсĕ мĕн, чалăш куç, кулатăн-и манран? Эпĕ халех санран та, кăткусенчен те нимĕр тăватăп. Унччен тата вĕсен çурчĕ çине ларса илĕп кăштах. Çирĕплĕхне тĕрĕслесе пăхăп». Ларчĕ хайхи кăткă тĕмми çине. Кăткăсем ун пек мăшкăла тӳсчĕр-и вара? Пурте хӳтĕленме çĕкленчĕç. Вĕсем вырăнтан хускалнине курса упа малтанах савăнчĕ-ха: «Аха, паттăрсем, тапрантăр-и? Вăрманта кам хуçа пулнине пĕлĕр ĕнтĕ малашне».

Кăткăсем тем самантрах ун çине хăпарчĕç, çемçе вырăнсене шыраса тупса сăнă пек тăрăнчĕç, çыртма пуçларĕç. Упа малтан хыçкаланчĕ, хăлаçланчĕ. Анчах тир патне çитсе ăна çимеллипех çиме тытăннă кăткăсенчен мĕнле хăпайăн? Упа тарăхнипе кăткă тĕммине тяппипе çĕклесе хăй çине ыватрĕ. Ĕнтĕ пуç тӳпинчен пуçласа ури тупанĕ таранах кăткă йăшăлтатать ун çинче. Кашниех çыртать. Утаман çапкалашать, çĕр çинче те йăваланать, анчах ним те тăваймасть. Упана шелleme тытăннăскер: «Мишша тете, вĕçтер часрах кунтан, атту сана çисе яраççĕ вĕсем!» – тесе кăшкăртăм эпĕ.

Çулне-йĕрне пăхмасăр тапса сикрĕ упа. Кăткăсенчен вăл мĕнле хăпса пĕтнине калаймастăп, анчах çавăн хыççăн утаман унашкал тĕмĕсенчен тата манран пăранса çӳрет.

Эп хам та унпа курнăçасшăнах мар. Хăйне вăрман хуçи текенскерĕн вăйсăрлăхне кăтартас килмест ĕнтĕ. Çакна йышăнма мăнкăмăллăхĕ памасть-тĕр».

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.